26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943 АВГУСТ 17 ЫТЛАРИКУН 164(6401) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Верховный Главнокомандующин Приказӗ

Кӑҫалхи августӑн 15-мӗшӗнче хаяр ҫап ӑҫусем хыҫҫӑн 16-мӗшпе 84-мӗш Гвардейски стрелковӑй дивизисем тата 238-мӗшпе 369-мӗш стрелковӑй дивизисем КАРАЧЕВ хулине нимӗҫ захватчикӗсенчен ирӗке кӑларчӗҫ. Ҫав дивизисем ку ӗҫре паттӑрлӑхпа ҫапӑҫури ӑсталӑхӑн тӗслӗхӗсене кӑтартрӗҫ.

Ҫав ҫитӗнӳсене паллӑ туса, 16-мӗшпе 84-мӗш Гвардейски стрелковӑй дивизисене, 238-мӗшпе 369-мӗш стрелковӑй дивизисене, КАРАЧЕВ хулине ирӗке кӑларнӑскерсене, „КАРАЧЕВСКИ" ятсем парас, малалла вӗсене ҫапла чӗнмелле тӑвас:

16-мӗш Гвардейски Карачевски стрелковӑй дивизи.
84-мӗш Гвардейски Карачевски стрелковӑй дивизи.
238-мӗш Карачевски стрелковӑй дивизи.
369-мӗш Карачевски стрелковӑй дивизи.

Верховный Главнокомандующий Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1943 ҫулхи августӑн 15-мӗшӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

АВГУСТӐН 14-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Августӑн 14-мӗшӗнче пирӗн СПАС-ДЕМЕНСК районӗнчен тапӑнса пыракан ҫарсем, 6 километртан пуҫласа 8 километра ҫити малалла куҫса, халӑх пурӑнакан 20 пункта ытла йышӑнса илнӗ.

БРЯНСК енче пирӗн ҫарсем, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе пырса, уйрӑм участоксенче 4 километртан пуҫласа 8 километра ҫити малалла куҫнӑ, халӑх пурӑнакан 60 пункта ытла йышӑнса илнӗ.

ХАРЬКОВ енче пирӗн ҫарсем, тӑшман хирӗҫ тӑнине тата унӑн танкӗсемпе пехотин контратакисене ҫӗнтерсе, ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта йышӑнса илнӗ.

Ытти фронтсенче пирӗн ҫарсем разведка тунӑ тата тӑшмана хирӗҫ артиллерипе миномётсенчен персе тӑнӑ.

Августӑн 13-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 69 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллерирен персе, тӑшманӑн 54 самолетне ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Спас-Деменск хулине тытса илнӗ хыҫҫӑн пирӗн ҫарсем ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ. Пӗр соединени боецӗсем 3 кун хушшинчи ҫапӑҫусенче тӑшманӑн 8.000 салтакӗпе офицерне ҫити вӗлернӗ, 58 танк, тӗрлӗ калибрлӑ 128 тупӑ тата 160 пулемет пӗтерсе тӑкнӑ. Тӑшманӑн 200 дзочӗпе блиндажне ҫити ҫӗмӗрсе тӑкнӑ е кӗпсе антарнӑ. Трофейӑсем нумай тытса илнӗ, вӑл шутра 4 хӗҫпӑшал складӗ, темиҫе продовольстви складӗ тата тӗрлӗрен ҫар пурлӑхӗ сыракан складсем пур. Пирӗн тепӗр соединенин чаҫӗсем халӑх пурӑнакан 19 пункта ирӗке кӑларнӑ, тӑшман пехотине икӗ полкран кая мар пӗтерсе тӑкнӑ. 300 гитлеровеца ҫити тыткӑна илнӗ. Нимӗҫсенчен 9 паровоз, 184 вагон, тӗрлӗрен инженерла пурлӑх тиенӗ 126 платформа, армисен куҫса ҫӳрекен ремонтнӑй мастерскойӗсене, 4 продовольстви складне, боеприпассем нумай тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ.

Малалла тапӑнса пырса, пирӗн ҫарсем кун каҫиччен 6 километртан пуҫласа 8 километра ҫити малалла куҫнӑ, халӑх пурӑнакан 20 пункта ытла йышӑнса илнӗ.

* * *

Брянск енче пирӗн ҫарсем Карачев хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре ҫапӑҫнӑ. Чугунҫул районӗнче тӑшман ирхине тулҫуталма тытӑнсанах пехотӑн пысӑк вӑйӗсемпе 24 танкпа контратакӑна кӗртсе янӑ. Пирӗн артиллери тӑшманӑн 11 танкне тата хӑй тӗллӗн ҫӳрекен темиҫе туппине персе ҫӗмӗрнӗ. Тӑшман контратаки путланса ларнӑ. Каялла чакакан гитлеровецсем хыҫҫӑнах пырса, пирӗн пӗр чаҫри гвардеецсем ҫав вырӑнти вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ тата питӗ кирлӗ высотана штурмласа йышӑнса илнӗ. Карачев хули патӗнче кун каҫиччен пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 2.500 салтакӗпе офицерне, 20 танкне тата 98 туппине пӗтерсе тӑкнӑ. Тӑшманран 12 танк, 56 тупӑ тата 42 миномет тытса илнӗ.

Шаблыкино район центрне тытса илнӗ хыҫҫӑн пирӗн ҫарсем ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ, малалла куҫса, халӑх пурӑнакан 30 пункта ытла йышӑнса илнӗ.

* * *

Харьков енче пирӗн ҫарсем ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ.

Харьковран хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшман хаярран хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе пырса, халӑх пурӑнакан чылай пунктсене йышӑнса илнӗ. Пӗр чаҫри боецсем халӑх пурӑнакан пӗр пунктшӑн пынӑ ҫапӑҫура кӑна 900 гитлеровеца, нимӗҫсен 7 танкне тата 2 артиллери батарейине пӗтерсе тӑкнӑ. 8 танк, 19 тупӑ, 64 пулемет, боеприпассен 2 складне тата инженерла пурлӑх складне тытса илнӗ.

Харьковран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре нимӗҫсен танкӗсемпе пехоти темиҫе хутчен хаяр контратакӑсем тунӑ. Пирӗн чаҫсем тӑшмана кашнинчех каялла ывӑта-ывӑта янӑ. Ҫав ҫапӑҫусенче тӑшманӑн 26 танкне, вӑл шутра 10 «тигр» йышши йывӑр танка, пӗтерсе тӑкнӑ. Тӑшман ҫын тӗлӗшпе пысӑк ҫухату тӳснӗ.

* * *

Ленинград фронтӗнче пирӗн чаҫсем нимӗҫсен 600 салтакӗпе офицерне ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Артиллери пеннипе минометсен 4 батарейине пӗтерсе тӑкнӑ, 35 дзотпа 17 блиндажа ишӗлтерсе антарнӑ. Артиллери тата миномет батарейисене нумай пусарса лартнӑ. Нимӗҫсен персе тӑмалли позицийӗсенче пушарсем нумай тухнӑ, пушарсенче вӑйлӑ взрывсем пулнӑ.

* * *

Новороссийскран ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тӑшман темиҫе контратака тунӑ. Артиллерирен тата пӑшалсемпе, пулеметсемпе персе, пирӗн боецсем 400 гитлеровеца ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсене каялла чакма тивнӗ. Тӑшманран 2 тупӑ, 38 пулемет, 250 винтовка тата ытти трофейӑсем тытса илнӗ.

* * *

Смоленск облаҫӗнчи районсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен отрячӗ каҫхине пӗр пысӑк чугунҫул станцин хуралне сасартӑк тапӑннӑ. Партизансем гитлеровецсене пӗр ротӑна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Станцине кӗртсе яракан тата станцирен кӑларса яракан стрелкӑсене, чугунҫул кӗперне сирпӗнтерсе янӑ. Боеприпассем тиенӗ икӗ эшелона тата горючи тиенӗ пӗр эшелона вут тивертсе ҫунтарса янӑ. 46 автомашина, 5 танк, артиллери снарядӗсем тиенӗ 21 вагон, патронсем тиенӗ 17 вагон, авиабомбӑсем тиенӗ 9 вагон тата горючи тултарнӑ 9 цистерна пӗтерсе тӑкнӑ. Смоленск облаҫӗнчи тепӗр отрядра тӑракан партизансен ушкӑнӗ нимӗҫсен аэродромне кӗрсе кайнӑ та «Юнгерс—88» йышши пӗр самолета ҫунтарса янӑ тата авиабомбӑсен складне сирпӗнтерсе янӑ. Взрыв пулнипе аэродромри ҫуртйӗрсем тата темиҫе автомашина пӗтнӗ.

* * *

Нимӗҫ оккупацийӗ вӑхӑтӗнче ҫав тери йывӑр асапсем тӳссе Орел хулинче пурӑннӑ вырӑнти ҫынсем нумайӗшӗ, Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсем хула патне ҫывхарса пынине пӗлсен, хӑйсене ирӗке кӑларакан тӑван боецсем патне чупса куҫма пуҫланӑ. Нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсем ҫав ҫынсене пулеметсемпе тата автоматсемпе пере-пере вӗлернӗ. Гитлеровецсем Орел хулинче пурӑнакан мирлӗ совет гражданӗсене персе пӑрахассипе, хӗҫпӑшл вӑйӗпе хӑратса, Германи каторгине хӑвала-хӑвала кайнӑ. Пӗтӗм тӗнче йышӑннӑ мӗнпур законсене тата ӗлӗкрен пыракан вӑрҫӑ йӑлисене нимӗн те пӑхмасӑр гитлерла бандитсем ҫамрӑк ачасемпе ватӑ стариксене тыта-тыта лагерьсене хупса лартнӑ, тыткӑна илнӗ ҫар ҫыннисем шутне кӗртнӗ.

Аялларахра нимӗҫсен ҫар коменданчӗн Гаман генерал-майорӑн Орел хулинчи урамсенче ҫыпӑҫтарса тултарнӑ пӗлтерӗвӗн пӗтӗмӗшпех пичетлетпӗр. Ку пӗлтерӗве урамсенче Орел хулине совет ҫарӗсем йышӑнса илес умӗн темисе кун маларах ҫыпӑҫтарнӑ.

«Пӗлтерӳ

Орел хулине ҫапӑҫу пыракан вырӑнта ларать тесе шутламалла.

Гражданла халӑхӑн хуларан халех хӗвеланӑҫнелле тухса каймалла. Ытти еннелле тухса кайма хӗҫпӑшал вӑйӗпе чарса тӑрас пулать.

15 ҫултан пуҫласа 55-е ҫитнӗ хӗҫпӑшал тытма пултаракан арҫынсене ӗлӗкхи пекех пурне те тытса чармалла. Вӗсем казарма урамӗнчи лагере халех пырсан тин хӑйсене тытса чарассинчен хӑтӑлма пултараҫҫӗ.

Тӗттӗм пулсан урамра тӗл пулакан кашни граждансла ҫынна персе пӑрахмалла.

Ҫар коменданчӗ генерал-майор Гаман».

Орел хулинчи ҫынсем нумайӗшӗ гитлерла каторгӑна лекесрен тата куҫ умӗнчи вилӗмрен пытанса ҫӑлӑнса юлнӑ. Анчах та нимӗҫ командованийӗ хулари мирлӗ ҫынсене персе пӑрахассипе хӑратса каторгӑна хӑваласа каймашкӑн мӗн тума пултарнӑ, ҫавна пурне те тума тӑрӑшни чӑн факт пулса юлать.

Нимӗҫсен ҫар коменданчӗ Орел хулинче кӑларнӑ, ҫӳлерех пичетленӗ пӗлтерӳ гитлерла командовани мирлӗ совет гражданӗсем тӗлӗшпе ҫав тери киревсӗр мерӑсем йышӑнса пурнӑҫа кӗртсе пынине татах та тепӗр хут ҫирӗплетсе парать.

АВГУСТӐН 15-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Августӑн 15-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем БРЯНСК енче, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе, урамсенче пулса иртнӗ хаяр ҫапӑҫусем хыҫҫӑн КАРАЧЕВ хулине йышӑнса илнӗ.

Ҫав енчех пирӗн ҫарсем, ҫаплах малалла тапӑнса пырса, 6 километртан пуҫласа 10 километра ҫити малалла куҫнӑ, халӑх пурӑнакан 70 пункта ытла йышӑнса илнӗ. Вӑл шутра ХВАСТОВИЧИ район центрне. ЗИКЕЕВО, ЩИГРЫ, ЛОВАТЬ, СТАЙКИ, ПЕСОЧНАЯ, БОШИНО, МУРАВЕЛЬНИК, ЖЕЛЕЗНАЯ, ГАВРИЛОВКА ятлӑ халӑх пурӑнакан пысӑк пунктсене тата СОЛОНОВКА, ЗИКЕЕВО ятлӑ чугунҫул станцийӗсене илнӗ.

ХАРЬКОВ енче пирӗн ҫарсем, тӑшман контратакисене сирсе, ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта йышӑнса илнӗ.

Пирӗн СПАС-ДЕМЕНСК районӗнчен тапӑнса пыракан ҫарсем малалла куҫнӑ тата хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ.

Ытти фронтсенче пирӗн ҫарсем разведка тунӑ тата тӑшмана хирӗҫ артиллерипе минометсенчен персе тӑнӑ.

Августӑн 14-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 70 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллерирен персе, тӑшманӑн 64 самолетне ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Брянск енче пирӗн ҫарсем ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ.

Карачев районӗнче хулана пымалли вырӑнсене хӳтӗлесе тӑракан высотасене тытса илессишӗн 3 кун хушши хаяр ҫапӑҫусем пынӑ. Ҫак питӗ кирлӗ позицисене темле пулсан та хӑй аллинчех тытса тӑрасшӑн пулса, тӑшман ҫапӑҫӑва пехотӑпа танксен ҫӗнӗ резервӗсене кӗртсе янӑ. Пирӗн гвардейски подразделенисем, нимӗҫсем хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе, ҫав высотасене штурмласа йышӑнса илнӗ те, аркатса тӑкнӑ тӑшмана хӑваласа пырса, хула урамӗсене вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Хулашӑн урамсенче пынӑ ҫапӑҫусенче тӑшманӑн пысӑк вӑйӗсене ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, Карачев хулине йышӑнса илнӗ. Трофейӑсем нумай тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем те нумай.

Карачев хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн чаҫсем, малалла куҫса, халӑх пурӑнакан 50 пункта ытла, вӑл шутра Хвастовичи район центрне, йышӑнса илнӗ. Халӑх пурӑнакан ҫав пунктсемшӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пӗр соединени чаҫӗсем тӑшманӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 3 пин ҫынна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсен 28 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ, 18 тупӑ, вӑл шутра хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 4 тупӑ, 15 миномет, 86 пулемет тата ҫар грузӗсем тиенӗ темиҫе вунӑ автомашинӑпа лава пӗтерсе тӑкнӑ.

Дмитровск-Орловский хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пӗр соединени чаҫӗсем халӑх пурӑнакан 25 пункта нимӗҫ оккупанчӗсенчен ирӗке кӑларнӑ.

* * *

Харьков енче пирӗн ҫарсем ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ.

Харьковран хӗвеланӑҫнерехре пӗр гвардейски соединени, тӑшман контратакисене сирсе, малалла куҫнӑ, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта йышӑнса илнӗ. 900 гитлеровеца ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. 11 тупӑ, 3 бронемашина, 24 пулемет тата ытти трофейӑсем тытса илнӗ. Тепӗр участокра пирӗн боецсем нимӗҫсен 26 танкне тата хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 2 орудине пӗтерсе тӑкнӑ.

Харьковран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пӗр соединени чаҫӗсем, тӑшманӑн темиҫе контратакине сирсе ярса, малалла куҫнӑ, нимӗҫсен вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ позицийӗсене йышӑнса илнӗ. Трофейӑсем тытса илнӗ, вӑл шутра 13 тупӑ, 53 пулемет, ултӑ кӗпҫеллӗ 25 миномет, 80 автомашина тата боеприпассен 8 складне тытса илнӗ.

Совет боецӗсем Украина ҫӗрне нимӗҫ захватчикӗсенчен ситех те паттӑррӑн та хӑюллӑн тасатаҫҫӗ. Старши сержант Матвеев Ахтай казах штык вӗҫҫӗн пулса иртнӗ тытӑҫура 5 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ тата 3 нимӗҫ салтакне хӗҫпӑшалсӑрлантарса тыткӑна илнӗ. Снайпер Нурудинов узбек машинӑран тухнӑ нимӗҫ танкисчӗсене пӗтерсе тӑкнӑ та вӗсен «тигр» йышши пӗтӗмӗшпех юсавлӑ танкне тытса илнӗ. Автоматчик Зляев Курбан туркмен халӑх пурӑнакан пӗр пунтшӑн пынӑ ҫапӑҫура хӑй автоматӗпе персе нимӗҫсен 17 салтакне тата пӗр офицерне вӗлернӗ. Красноармеец Башилов тутар пӗр ҫапӑҫура хӑй винтовкипе персе 20 нимӗҫе пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Пирӗн Спас-Деменск районӗнчен наступлени туса пыракан войскӑсем малалла куҫнӑ тата хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ. Нимӗҫсем халӑх пурӑнакан пунктсене нумайӗшне йӗри-тавра оборона тытма майласа хатӗрленӗ, вӗсем ҫав пунктсем тавра траншейӑсем алтса ҫаврӑннӑ, вӑл пунктсем патне пымалли вырӑнсене пралук карса тата минӑсем лартса картласа хунӑ. Ҫав тӗреклетнӗ пунктсем пулӑшнине пула тӑшман хаяррӑн хирӗҫ тӑрать. Ҫавӑн пек вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ Веркуличи пункчӗ районӗнче хаяр ҫапӑҫу пулса иртнӗ. Кунта пирӗн боецсем нимӗҫсен контратакине сирсе янӑ та, флангсенчен ҫав тери хӑвӑрт пырса ҫапса, тӑшмана Веркуличирен хӗссе кӑларнӑ. Ҫав ҫапӑҫура 400 гитлеровеца ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. 12 тупӑ, пулеметсемпе минометсем нумай тата продовольстви хунӑ пысӑк склада тытса илнӗ. Пӗр соединени боецӗсем ҫапӑҫса малалла куҫнӑ, халӑх пурӑнакан 30 пункта йышӑнса илнӗ, нимӗҫсен 1200 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейӑсем тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

Пирӗн авиаци тӑшман войскисем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ, вӗсене штурмланӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче пирӗн летчиксем кун каҫиччен нимӗҫсен 25 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Чугуев хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн подразделенисем Ҫурҫӗр Донец шывӗ урлӑ каҫнӑ та халӑх пурӑнакан 3 пункта йышӑнса илнӗ. Совет боецӗсем нимӗҫсенчен 7 тупӑ, тягач тата боеприпассен 2 складне тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Волхов фронтӗнчи пӗр участокра тӑшман пирӗн позицисене кун каҫиччен 7 хутчен атакӑлама хӑтланнӑ. Минометсемпе тата пулеметсемпе вӑйлӑн персе, пирӗн подразделенисем тӑшманӑн пур атакисене те сирсе янӑ. Ҫав ҫапӑҫура нимӗҫ пехотине пӗр батальона ҫити пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Хура тинӗс порчӗсенчен пӗринче пирӗн летчиксем тӑшманӑн пӗр буксирне, десант антармалли пӗр баржине тата грузсем тиенӗ 3 баржине шыва путарнӑ. Кунсӑр пуҫне тата тӑшманӑн ҫав портра тӑнӑ ытти суднисене те сиенленӗ.

* * *

Украинӑра кӗрешекен партизансен Киров ячӗпе тӑракан отрядӗнчи пӗр ушкӑн партизан шоссе ҫулӗпе тӑшман обозӗ пыни ҫинчен пӗлнӗ. Вара

(Вӗҫӗ 2-мӗш страницӑра)

Пирӗн паттӑр земляксем

Ӳкерчӗк ҫинче: сулахайри—Ҫӗрпӳ районӗнчи Первомайск ялӗнче ҫуралса ӳснӗ капитан Василий Петрович Петров. Вӑл разведчиксен подразделенийӗн командирӗ пулнӑ. Пӗринче ӑна нимӗҫсен штабне тапӑнса кирлӗ сведенисем илсе килме хушнӑ. Петров юлташ хӑйӗн боецӗсемпе пӗрле тӑшман тылне 20 километр кӗрсе кайса, нимӗҫсен штабне тапӑннӑ та кӗске вӑхӑтри ҫапӑҫура 200 фашиста яхӑн вӗлерсе пӗтернӗ. Разведчиксем командовани заданине чыслӑн пурнӑҫа кӗртнӗ. Вӗсем штаба аркатса тӑкса кирлӗ сведенисем тата нимӗҫсен ҫар чаҫӗн ялавне илсе килнӗ. Кун пек ӗҫсем Петров юлташӑн фронтри пурнӑҫӗнче татах та сахал мар пулнӑ. Унӑн паттӑр ӗҫне пахаласа правительство ӑна Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗпе «За отвагу» медаль парса наградӑланӑ.

Сылтӑмри—тупӑ расчечӗн командирӗ старши сержант А. А. Ананьев.

Хаяр ҫапӑҫура пӗччен тӑрса юлса, А. А. Ананьев юлташ хӑйӗн туппипе персе 70 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ.

Командовани А. А. Ананьев старши сержанта Хӗрлӗ ялавпа Хӗрлӗ ҫӑлтӑр орденӗсем тата «За боевые заслуги» медаль парса наградӑланӑ.

Я. ПАВОЛОЦКИЙ фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Пирӗн авиаци Полтавӑпа Красноград чугунҫул узелӗсем ҫине, ҫавӑн пекех тата Харьковран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пухӑнса тӑнӑ тӑшман войскисемпе техники ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ

Августӑн 14-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн авиаци тӑшманӑн Полтавӑпа Красноград чугунҫул узелӗсенчи ҫар эшелонӗсене пыра-пыра ҫапнӑ. Бомбӑсем пӑрахнине пула чугунҫул ҫинчи темиҫе состав ҫӗмӗрӗлсе пӗтнӗ, пушарсем нумай тухнӑ, пушарсенче взрывсем пулнӑ.

Ҫав каҫах пирӗн авиаци тӑшманӑн Люботин станципе Валки хули районӗнче пухӑнса тӑнӑ войскисемпе техники ҫине бомбӑсем вӑйлӑн пӑрахнӑ.

Боевой заданирен 2 самолет таврӑнман.

Пирӗн авиаци Полтава, Красноград, Рославль чугунҫул узелӗсене тапӑнни

Августӑн 15-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн авиаци нимӗҫсен Полтавӑпа Красноград чугунҫул узелӗсенче тӑнӑ ҫар эшелонӗсем ҫине каллех бомбӑсем вӑйлӑ пӑрахнӑ. Пирӗн самолетсен экипажӗсем бомбӑсем тӳрремӗнех чугунҫул составӗсем ҫине ӳкнине палӑртнӑ. 40 ытла пушар тухнӑ. Пушарсенче нумайӗшӗнче вӑйлӑ взрывсем пулнӑ.

Ҫав каҫах пирӗн авиацин пысӑк вӑйӗсем Рославль чугунҫул узелне тапӑннӑ. Тӑшман ҫарӗсемпе техникин эшелонӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Пушарсем нумай тухнӑ. Чугунҫул узелӗн ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ пайӗнче питех те вӑйлӑ взрыв пулнипе пушар чугунҫул ҫинчи темиҫе эшелона хыпса илнӗ.

Пирӗн самолетсем пурте хӑйсен базисене таврӑннӑ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

Инвалидсен кооперации артелӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1943 ҫулхи июль уйӑхӗнчи итогӗсем

Чӑваш АССР Совнаркомӗ инвалидсен артелӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1943 ҫулхи июль уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухса, ӑмӑртура Шупашкарти «Чебторгин», Улатӑрти «Союз инвалидов» артельсем мала тухнӑ тесе йышӑннӑ.

Шупашкарти «Чебторгин» артель июльти плана 158,6 процент тултарнӑ, продукци кӑларассине июнь уйӑхӗпе танлаштарсан 2,1 процент ӳстернӗ. Кунсӑр пуҫне артель инвалидсене ӗҫ тупса парас тӗлӗшпе нумай ӗҫсем тунӑ. Ҫаксене шута илсе, Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне Канашри «Красный воин» артельтен илсе «Чебторгин» артеле (правлени председателӗ Мицина) памалла тунӑ тата артельти ӑмӑртура палӑрнӑ работниксене премилеме 15 пин тенкӗ укҫа пама йышӑннӑ.

Улатӑрти «Союз инвалидов» артеле (правлени председателӗ Сивогривов юлташ, горсовет исполком председателӗн ӗҫӗсене тӑваканӗ Гуськов юлташ), июльти пӗтӗм продукци кӑларас тӗлӗшпе 139,4 процент, широпотреб енӗпе 139,6 процент тултарнӑскерне, продукци кӑларассине июньрипе танлаштарсан 12 процент ӳстернӗскере, артель ӗҫӗнче палӑрнӑ работниксене премилеме 10 пин тенкӗ укҫа пама йышӑннӑ.

Совнарком июль уйӑхӗнче Канашри «Красный воин», Калинински районри Шӗнерти «20 лет Чувашии», Ишлей районӗнчи Чаканарти «Красный Стрелок», Улатӑр районӗнчи Кирери Киров ячӗпе тӑракан тата Сӗнтӗрвӑрринчи «Социализм» артельсем лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

Кировецсен пуҫарӑвне ырласа

Мускаври С. М. Киров ячӗпе тӑракан «Динамо» завод коллективӗ Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва 1943 ҫулӑн иккӗмӗш ҫурҫулне тӑсма чӗнсе каланине Канашри вагонсем юсакан завод коллективӗ пӗр кӑмӑлпа йышӑнса илчӗ. Вӑл кировецсен пуҫарӑвне ырласа, ҫулталӑкри производство планне Сталинла Конституци кунӗ тӗлне тултарма, планпа палӑртнинчен ирттерсе ӗҫ тухӑҫлӑхне 10 процент ӳстерме, продукци хакне 4 процент йӳнетме, ҫулталӑк вӗҫлениччен 1.200.000 киловат-сехет электроэнерги тата рационализациллӗ сӗнӳсем парса 500 пин тенкӗлӗх перекет пама йышӑнчӗ. Кадрсем хатӗрлес плана декабрь уйӑхӗччен тултармалла. Кусемсӗр пуҫне завода хӗле хатӗрлес тӗлӗшпе тумалли ӗҫсене октябрь уйӑхӗччен вӗҫлеме, подсобнӑй хуҫалӑхри пахча-ҫимӗҫсене вӑхӑтра, тӑкаксӑр пуҫтарса кӗртме т. ыт. те йышӑнна.

* * *

Охверкӑри «Самолет» промартель коллективӗ кировецсем чӗнсе каланине сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑн ҫулталӑкри плана декабрӗн 5-мӗшӗнче тултарма, ӗҫ тухӑҫлӑхне 10 процент ӳстерме, брак тӑвассине пӗтӗмпех пӗтерме, ӗҫ хатӗрӗсене, ҫуртйӗрсене артельте ӗҫлекенсен вӑйӗпе юсама пулчӗҫ. Артельте ӗҫлекенсем районри предприятисенчи рабочисене Октябрь уявне пысӑк ҫӗнтерӳсемпе кӗтсе илессишӗн социализмлӑ ӑмӑртӑва ҫарса пыма чӗнеҫҫӗ.

Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ ялавне илессишĕн!

Ăмăртура кая юлар мар

ПЕРВОМАЙСКОЕ, августăн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). «Путь социализма» колхоз (председателĕ Маркиданов юлташ) ĕнер кĕрхи тата çурхи тырăсене вырса пĕтерчĕ. Колхозниксем ĕçре машинăсемпе, кĕреплеллĕ çавăсемпе аван усă курчĕç. 206 гектартан—100 гектар çинчи тырра жнейкăсемпе, 59 гектар çурлапа вырнă, ыттисене вара йăлтах кĕреплеллĕ çавăсемпе çулнă. Колхоз ытти ĕçсенче те юлмасть. 30 гектар çинчен кĕлте турттарса капана хывнă, государствăна тырă памалли плана 50 процент тултарнă. Тырă памалли графика колхоз тăтăшах пурнăçласа пырать. Кĕлтесене капана хывас, авăн çапас тĕлĕшпе иртен пуçласа каçчен ĕçленисĕр пуçне, уйăх çуттипе те ĕçлĕççĕ.

«Авангард» колхоз (председателĕ Пузырев юлташ) августăн 14-мĕшĕ тĕлне 160 гектар çинчи тырра вырса пухнă. Е. Семенова, П. Чурбанова, М. Ягудина колхозницăсем кулленех 0,27 гектар таран тырă вырса ĕç нормине 200—250 процент ытла тултараççĕ. Государствăна тырă памалли графика «Авангард» колхоз кашни пиллĕк кунрах ăнăçлăн пурнăçласа пырать.

И. ДОЛГОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Уйăх çутипе тырă выраççĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, августăн 16-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Чурбайри «Большевик» тата «Будь готов» колхозсем кăçал уборка ĕçĕсене иртнĕ çулхинчен хăвăртрах туса пыраççĕ. «Будь готов» колхоз пăри, урпа, тулă вырса кĕртсе, вĕсене çапса пĕтерНĕ. Тепĕр виçĕ кунтан сĕлĕ вырса пĕтереççĕ. Ку колхозра юлашки кунсенче çанталăк уяр тăнипе туллин усă кураççĕ. Каçхине уйăх çутипе тырă выраççĕ тата авăн çапаççĕ. Ĕнер колхоз хатĕрлев пунктне 40 центнер тырă ăсатрĕ, пурĕ государствăна тырă 62 центнер, хăяр 4,5 центнер панă.

Колхоз ĕçĕнче çамрăксем паха пример кăтартаççĕ. С. Ельцова, Т. Тарасов, А. Петрова, Т. Ельцов тата ытти чылай юлташсем куллен икшер норма тултараççĕ.

Колхозниксем Вăрнар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем чĕнсе каланине сӳтсе явнă хыççăн уборка ĕçĕсене тата государствăна тырă, пахча-çимĕçсем парассине хăвăртлатма пулчĕç.

«Будь готов» колхозпа ăмăртса ĕçлекен «Красный воин» колхозра вара ĕç пачах урăхла пырать. Унта тырă выраcси юлса пырать, ку таранччен 3 гектар тырра кăна çапнă. Кĕрхи тырăсене çуррине кăна акнă. Колхозниксем хушшинче дисциплина начар. Ĕçе ирхине 7—8 сехетре тухаççĕ те хĕвел аничченех каялла кĕреççĕ. Сдельщина çук. Колхозниксене ĕçкунĕ гектар тăрăх мар, миçе сехет ĕçленине пăхса параççĕ. Правлени председателĕ Герасимов юлташ уйра сахал пулать, вăхăта килĕнче ачасем пăхса ларса ирттерет. Ялти учительсем колхозниксем хушшинче массăллă ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе пулăшмаççĕ.

Х. ЛИСИН.

Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт парассишĕн

СЕНТЕР, августăн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Пушкăрт ялсоветĕнчи «Новый путь» колхозра августăн 13-мĕшĕнче уйра кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче колхозниксен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура колхозниксем Вăрнар районĕнчи колхозниксен чĕнĕвĕпе паллашрĕç, ăна ырласа вĕсем социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Тăван çĕршывпа хамăрăн геройла Хĕрлĕ Çара пулăшу парас тĕлĕшпе Вăрнар районĕнчи колхозсенчен кая мар пулас терĕç «Новый путь» колхоз членĕсем. Ăмăртăва тухса конкретнăй обязательствăсем илчĕç.

Колхоз государствăна октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне тырăпа ытти продуктсене парса татассишĕн, кĕракине августăн 24-мĕшĕнче вĕçлессишĕн кĕрешет. 653 гектартан вĕсем 495 гектар тырă вырса пухнă. Кашни кунах 5 жнейка тата кĕрплеллĕ çавасемпе тырă выраççĕ. Кашни колхозник талăкри нормăна ик-виçĕ хут ирттерсе тултарса пыма тăрăшать. Çапла пĕтĕм майсемпе туллин усă курса «Новый путь» колхозра халĕ кулленех 45—60 гектар таран тырă выраççĕ. М. Лукоянова, Л. Вашурова, А. Кудряшов юлташсем тырра кĕреплеллĕ çавасемпе 0,42—0,46-шар гектар таран çулаççĕ.

Колхоз кĕрхи тырăсене 6 ĕç кунĕнче вырса пуçтарчĕ. 200 гектар ытла кĕрхи тырăсене кĕреплеллĕ çавасемпе, 110 гектар жнейкăсемпе вырнă.

Ĕнерхи кун тĕлне кунта 50 гектар кĕрхи тырăсем акнă. Акара 4 сеялкăпа кулленех 20 гектар акаççĕ. Колхоз производствинче коммунистсем пример кăтартаççĕ. Коммунистсем Алексеев, Кириллов юлташсем ертсе пыракан бригадăсем пуринчен те лайăх ĕçлеççĕ.

Ĕнер колхоз коммунистсемпе комсомолецсен пуçарăвĕпе государствăна тырă леçме 17 лавлă хĕрлĕ обоз организацилерĕ. Государствăна 45 центнер тырă пачĕ. «Новый путь» колхоз çапла государствăна 155 центнер тырă леçсе панă.

С. СОКОЛОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Ĕçпе ответлеççĕ

ТАВАЙ, августăн 16-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Вăрнар районĕнчи колхозниксен паха чĕнĕвне ырласа, районри колхозсем Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт парассишĕн кĕрешĕве тухрĕç. Тăрмăш ялсоветĕнчи Ленин ячĕпе тăракан, «Красная Чувашия», «Çăлтăр», «Хурçă» колхозсем вăрнарсен чĕнĕвне йышăнса, ялхуçалăх ĕçĕсене Октябрь революцийĕн аслă уявĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех вĕçлеме обязательство илчĕç. Уборка ĕçĕсем халĕ ку колхозсенче кунран кунах вăйланса пыраççĕ.

Тăрмăшри Ленин ячĕпе тăракан колхоз ĕнер государствăна тырă пама хĕрлĕ обоз организацилерĕ. Хатĕрлев пунктне 45 центнер тырă леçрĕ.

«Çăлтăр» колхоз паян тырă вырса пĕтерет. Çурхи тырăсене 286 гектар вырса пуçтарнă, 100 гектар çинчен кĕлте кӳрсе капана хывнă.

Кивĕ Пуянкассинчи «Социализм» колхоз авăн çапнă çĕрте шыв арманĕн вăйĕпе усă курать. Авăна икĕ сменăпа кунĕн-çĕрĕн çапаççĕ.

«Горьковская Коммуна» колхоз çак кунсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1943 çулхи плана пур йышши выльăхсем енĕпе те пурнăçларĕ. «Красная Чувашия» колхоз государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăсене тултарчĕ. 43 центнер аш-какай, 19 пин литр сĕт тата ыттисене те панă. Выльăхсене хĕле кĕртме витесене аван юсанă, 260 тонна силос, 40 центнер витаминлă апат, 70 лав çулçăллă апат хатĕрленĕ.

А. КАХОВСКИЙ.

Комбайнер Фадеев

ШАМАРША, августăн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Комбайнпа тырă вырас ĕçĕн мастерĕ Фадеев юлташ, Чкалов облаçĕнчи малта пыракан комбайнерсемпе трактористсем чĕнсе каланин çине ответлесе, кăçал хăйĕн комбайнĕпе 700 гектар тырă пухса кĕртме сăмах панăччĕ. Хăйĕн сăмахне Фадеев юлташ чыслăн пурнăçласа пырать. Çанталăк çăмăрлă пулни чăрмантарчĕ пулсан та, Фадеев юлташăн комбайнĕ сехет пек тĕрĕс ĕçлет. Шурăмпуç çуттипе ĕçлеме пуçлать те вăл сĕм тĕттĕм пулсан çеç чарăнать. 4 талăк хушшинче Фадеев юлташ «Коммунар» комбайнпа 115 гектар тырă пухса кĕртрĕ.

Б. ВИСЛОБОКОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

„Красное Сормово" колхозра

ОКТЯБРЬСКОЕ, августăн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Вăрнар районĕнчи колхозниксем чĕннипе «Красное Сормово» колхоз Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт парассишĕн кĕрешме социализмлă ăмăртăва активлăн хутшăнчĕ. Колхозниксем хăйсем умне çакăн пек задача лартрĕç: пĕтĕм тырпула августăн 19-мĕшĕнче вырса пĕтерсе, сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне государство умĕнчи пур обязательствăсене те татмалла.

Колхозăн вырмалли тырă татах 96 гектар пур. Ăна асăннă кун тĕлне вырса пĕтерессишĕн халĕ колхозниксем ырми-канми тăрăшаççĕ. Е. Крымзова, К. Чайкова, Е. Смирнова тата ытти нумай колхозницăсем талăкри ĕç нормине кулленех 200—250 процент тултарса ĕçлеççĕ. Учительница Ю. Матвеева юлташ çак иртнĕ виçĕ кун хушшинче тырă вырса 16 ĕçкунĕ ĕçлесе илчĕ.

Государствăна кулленех тырă параççĕ. Транспорт бригади тикĕс ĕçлет. Паянхи куна колхоз государствăна 96 центнер ыраш панă. Çавăн пекех «Красное Сормово» колхоз государствăна 1943 çулшăн аш-какай, çăм, çăмарта парса татнă, сĕтçу обязательствине сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне парса татаççĕ.

П. ЛЕНАР.

Сехет пек тикĕс ĕçлер

ÇĔРПУ, августăн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). «Шумашар» колхоз тырă вырса пĕтерчĕ. Çак колхозри ĕçлеме пултаракан кашни колхозникпе колхозница уборка вăхăтĕнче кулленех ĕç нормине ирттерсе тултарса пырать. Çавна пула колхоз тырăсене районра пуринчен те малтан вырса пуçтарчĕ. Кĕрхи тырăсене вĕсем 5 ĕç кунĕ хушшинче, çурхи тырăсене 8 ĕç кунĕ хушшинче вырса пухрĕç. Ĕçе паха тăвассишĕн кĕрешрĕç. Пучах пухма шкулта вĕренекен ачасенчен отряд тунă. Çав отряда Вязкова учительница ертсе пычĕ. Ачасем колхоза 3 центнер пучах пухса пачĕç. «Шумашар» колхоз ĕнер государствăна ыраш парса татрĕ.

Вăрнар районĕнчи колхозниксен чĕнĕвне Çĕрпӳ районĕнчи колхозсем йышăнчĕç. Тырпулсене ăнăçлăн пухса кĕртни тата государствăна тырпул памалли обязательствăсене срокчен пурнăçлани çинчен Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт пама право илессишĕн социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Августăн 15-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче колхозсем фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх туса ирттереççĕ.

Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăхăн задачисене ăнăçлăн пурнăçласа пырса, районри 8 колхоз государствăна ыраш парса татрĕç. «Чăваш ЦИК» колхоз (председателĕ Скворцов юлташ) августăн 15-мĕшĕнче хатĕрлев пунктне хĕрлĕ обозпа 30 лав тырă леçрĕ.

Д. МИТЬКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Государствăна тырă парса татрĕç

ВАРМАР, августăн 16-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Паян «Атнаш», «Парижская Коммуна», «Большевик», «Коминтерн», «Смычка» колхозсем—районĕпе пурĕ 12 колхоз—пур тырăсене те вырса пĕтерчĕç. «Парижская Коммуна», «Атнаш» колхозсем государствăна 1943 çулта тырă памалли обязательствăсене районри колхозсенчен пуринчен те малтан пурнăçларĕç. Район государствăна тырă памалли 4-мĕш пилĕккунлăхри графика 109 процент тултарчĕ. Тырă парас тĕлĕшпе «Свобода», «Заря», «Красная кубня» колхозсем те малта пыраççĕ.

Кĕрхи тырăсем акас ĕç районра вăйлă пулса пырать. Паянхи куна 1.215 гектар тырă акнă. Пĕтĕмпех машинăсемпе акаççĕ.

«Большевик» колхоз членĕсем Вăрнар районĕнчи колхозниксен чĕнĕвне пысăк хак парса сӳтсе яврĕç. Тырпулсене ăнăçлăн пухса кĕртме тата государствăна тырă парассине срокчен пурнăçлама татăклă обязательствăсем илчĕç. Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт пама право илессишĕн кĕрешсе, колхоз тепĕр икĕ кунтан пур тырăсене те вырса пĕтерет, августăн 24-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татать.

В. ВЕСЕЛОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 15-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

вĕсем засада тунă. Тулли лавсем засада тĕлне çитсен, партизансем пулеметсемпе пеме пуçланă, çав обоза сыхласа пыракан хуралри 40 венгерец салтакне пĕтерсе тăкнă. Совет патриочĕсем венгерсен хĕçпăшалне тата çар грузĕсем тиенĕ 20 лавне тытса илнĕ.

* * *

Аялархра нимĕç сынçиенĕсем Орел хулинчен Германи каторгине илсе кайнă 17 çулхи Роза ятлă хĕрачан амăшĕ патне янă çыруран çырса илнĕ сыпăксене пичетлетпĕр: «Сывлăх пултăр, хаклă аннем! Сирĕнтен çырусем çук. Мĕн шухăшламаллине те пĕлместĕп. Эсир, паллах, начар пурăнатăр. Анне, ман япаласене пурне те сут та хăвна валли çăкăр ил. Ман валли нимĕн те ан усра. Эпĕ нумайччен чăтса пурăнайрас çук. Питĕ начарланса çитрĕм. Эпир Ф. барон патĕнче ĕçлетпĕр. Çав тери йывăр ĕçлеттереççĕ. Пĕтĕм шăмшак ыратать. Ĕçрен таврăннă чух хăш чухне мана хам юлташсем хулран тытса пулăшса пыраççĕ. Пилĕксем ыратнипе вăтă карчăксем пек йынăшатпăр. Çумăрта та, сивĕре те, шăрăхра та кунĕ-кунĕпех, ирхине ирех тытăнса хĕвел анса ларичченех ĕçлетпĕр. Пире улпут сарайĕнче усраççĕ, чӳречене тимĕрпе карнă, алăкне уçăпа питĕрсе илеççĕ. Пирĕн барон патĕнче 70 çын ĕçлет. Вĕсем Черниговран, Вязьмăран, Петергофран илсе килнĕ хĕрачасем. Пирĕн хушăра студентсем тата 10-мĕш класра вĕреннĕ ачасем нумай. Эпир пурте тăван çĕршыва курасшăн хуйхăрса йĕретпĕр... Анне, астăватăн-и, эпле эпĕ врач е актриса пулас тесе ĕмĕтленеттĕм? Халĕ эпĕ ун çинчен куççуль тăкмасăр аса илме те пултараймастăп. Эпир халĕ ирĕксĕр çумăр пĕлĕчĕсем пек, ĕмĕр çулçӳрекен çынсем пек, хамăр тăван çĕршыв патне çитсе тухма пултараймастпăр.

Ĕç вăхăтĕнче кăштах чарăнса шухăша кайсанах, çурăм хыçĕнче тăракан надзирательсем темĕн те пĕр ирсĕр сăмахсемпе кăшкăрса вăрçма пуçлаççĕ, куçран куççуль юхма пуçлать. Пĕр канмасăр тата хăвăрт ĕçлеме хушаççĕ, кăшт çурăма тӳрлетме пуçа çĕклесенех, надзиратель хăйĕн чăпăркипе çапса ярать. Ман чун хавалĕ нихăçан та хальхи пек пăчăлăхра асапланман. Анне, каçар мана. Тен, ку çыру манăн юлашки çыру пулĕ. Роза».

Совет халăхĕ фашистсен читлĕхĕнче пурăнакан хăйĕн хĕрĕсем чăтса тӳснĕ хуйхăпа вĕсен куççульне нихăçан та манас çук. Эпир чурасемпе сутă тăвакан, совет çыннисене асаплантаракан ирсĕр нимĕçсене пурне те шута илсе пыратпăр. Хаяррăн тата тивĕçлипе тавăрассинчен фашистла çынçиенсем пĕри те хăтăлса юлаймĕç.

Ют çĕршывсенче

Сицилири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен çарĕсем ĕнер фронтăн пур участокĕсенче те çаплах малалла куçса пынă. Вăтаçĕрти секторта Англи çарĕсемпе Америка çарĕсем пĕр-пĕринпе килĕшсе çапăçнă хыççăн Рандаццо хулине йышăнса илнĕ.

Сицили утравĕн хĕвелтухăç çыранĕнче, тăшман хаяррăн хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, акăлчансен 8-мĕш çарĕ Рипосто, Джарре тата Мило хулисене тытса илнĕ.

Рандаццо хулинчен çурçĕрелле ăнăçлăн куçса пырса, американецсен чаçĕсем Флореста хулине йышăнса илнĕ, çавăн пекех тата Сицили утравĕн çурçĕр çыранĕнчи çул çинче вырнаçса ларакан Пираино хулине тытса илнĕ.

ЛОНДОН, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри штабĕ çапла пĕлтерет: союзниксен çарĕсем фронтăн пур участокĕсенче те чылай малалла куçнă. Акăлчансен 8-мĕш çарĕ çыранри участокра Мессина хулинчен 35 миля кăнтăртарахра вырнаçса ларнă Фиумефреддо тата Пьедимонте хулисене йышăнса илнĕ. Акăлчансен тата американецсен çарĕсен чаçĕсем, Рандаццоран хĕвеланăçнелле куçса пырса, Оливер хули патне çитнĕ, вăл Патти хулинчен 13 километр хĕвелтухăçнерехре вырнаçса тăрать.

Американецсен 7-мĕш çарĕн чаçĕсем Патти хулипе Сан-Анджелло хулине тытса илнĕ. Американецсен çар карапĕсем Милаццо портне пенĕ.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, халĕ Этна тăвĕн районĕ пĕтĕмĕшпех союзниксен аллинче ĕнтĕ. Союзниксен фрончĕн линийĕ Этна тăвĕн çурçĕр аякки патĕнчен иртсе каять. Тăшман çарĕсем Мессина проливĕнчи портсемпе Мессина проливĕн çыранĕсем патнелле чакаççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: нимĕç командованийĕ итальянецсен чаçĕсене хăй кăтартнă позицисенче вырнаçтарса тухнă. Çапла вырнаçнипе итальянецсен чаçĕсем нимĕçсене Сицили утравĕнчен каялла чакма çăмăллатаççĕ. Тыткăна илнĕ итальянецсем каласа кăтартнă. тăрăх, нимĕçсен чаçĕсене Сицилирен ыттисенчен малтан кăларса каясси çинчен панă приказа пăхăнман итальянецсене нимĕçсем пере-пере пăрахаççĕ.

ЧЕРЧИЛЛЬ КАНАДĂНА ТАВĂРĂННА

ЛОНДОН, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Квебекри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, унта Великобританин премьер-министрĕ Черчилль Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен таврăннă. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче Рузвельтпа Черчилль канашлу туса ирттернĕ. Корреспондент малалла çапла пĕлтерет: Черчилльпе Рузвельт Квебекра штабсен начальникĕсен пĕрлешнĕ совечĕпе пĕрле пулса иртмелли канашлăвăн малтанхи хатĕрленӳ ĕçĕсене вĕçленĕ. Рузвельт часах Квебека çитессине кĕтеççĕ.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: августăн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Милан хулинчи промышленность предприятийĕсемпе çулйĕрсене питĕ хаяррăн пырса тапăннă. Тата кунсăр пуçне бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Турин хулине атакăланă.

Англи бомбардировщикĕсем Берлина тапăннă.

ЛОНДОН, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Америка бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕ ĕнер кăнтăрла тăшманăн Венăран кăнтăртарахра вырнаçса тăракан Винер-Нейштадт хулинчи заводсене ăнăçлăн тапăннă.

ЛОНДОН, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: августăн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Милан хулинчи Бредăн çар завочĕсене, çар валли ĕçлекен ытти предприятисене, çавăн пекех тата Миланăн промышленность районĕнчи çулйĕрсене те атакăланă.

Берлинри çар обьекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Тата унсăр пуçне Англи авиацийĕ Франципе Бельгири аэродромсемпе чугунçулсене атакăланă.

Италири лару-тăру

СТАМБУЛ, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Италире «кирлĕ пек йĕрке тата лăпкă пурнăç» çуккипе Итали влаçĕсем питех те шикленеççĕ. Италири хаçатсем кунран кунах, Бадольо правительствине «шанма тата пулăшма» чĕнсе, статьясем пичетлепичетле кăлараççĕ. «Италире халăха пăтраштаракан туртăмсем ĕçленине» хаçатсем «шиклентерекен» чылай фактсем илсе кăтартса пáраççĕ. «Гадзетта дель Пополо» ятлă хаçат пĕлтернĕ тăрăх, «Итали хресченĕсем государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парасси çинчен правительство панă приказа» итлемеççĕ. Хаçат çав приказа «усал шухăшпа итлеменни» çинчен калакан чылай фактсем кăтартса çырать, вара çакна палăртса хăварать: «Çакăн пирки айăплисене пурне те çар судне панă», тет.

ЖЕНЕВА, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцарире тухса тăракан «Нейе Цюрхер цейтунг» ятлă хаçат корреспонденчĕ Итали чиккинчен çапла пĕлтерет: «Итали халăхĕ хумханма пуçлани халĕ те чарăнман-ха», тет. Лако хулинче,—тет хаçат,—халăх фашистла чиновниксен пӳрчĕсене кĕре-кĕре кайса, çав чиновниксене хĕнесе тăкнисем те чылай пулнă. Хаçат çырнă тăрăх, Милан хулинчи хаçатсем, типографисенчи рабочисем забастовка тунă пирки, пĕчĕклетнĕ форматпа кăна тухса тăраççĕ.

ЖЕНЕВА, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Италирен çитнĕ хыпарсем тăрăх, Итали чугунçулĕсемпе транспорчĕн вспомогательнăй службинче военнăй положени тăвасси çинчен тухнă декрет çумне хушса çĕнĕ приказ кăларнă. Çав приказ тăрăх, шыв транспорчĕн пĕтĕм персональне миллитаризациленĕ тесе шутламалла.

Икĕ столица ăмăртăвĕ

Халех тумалли ĕçсем

Кăçал июль уйăхĕн пуçламĕшĕнче Чăваш тата Мари республикисен столицисем—Шупашкарпа Йошкар-Ола хушшинче социализмлă ăмăрту договорĕ тунă.

Икĕ столица договорне ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе, малти вырăна тухма пирĕн нумай ответлă ĕçсем тумалла. Хулари кашни промышленность предприяти, промартель тăрăх çулталăкри производство планне лайăх пахалăхлă продукци парса срокчен тултарас пулать. Хĕрлĕ Çарăн Главнокомандованийĕн фондне хывма планран ирттерсе продукци кăларассине пурнăçа кĕртмелле. Предприятисемпе артельсене тата учрежденисене хĕллене октябрь уйăхĕччен хатĕрлесе çитермелле. Çĕнĕ электростанци сторительствине вĕçлесе, ăна палăртнă вăхăтра ĕçе ямалла.

Хула хуçалăхне лайăхлатасси, строительство планне тултарасси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Коммунальнăй предприятисене, пурăнмалли çуртйĕрсене октябрь уйăхĕччен юсаса пĕтермелле. Предприятисемпе учрежденисенче, урамсенче тата килкартисенче тирпейлĕх тумалла, вĕсене ялан таса тытса тămалла, садсене, стадионсене, урамсенче лартнă йывăçсене лайăх пăхса усрамалла. Хула хуçалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртни ĕççыннисен пурнăç условисене лайăхлатма май парать. Анчах та горисполкомăн коммунальнăй хуçалăх отделĕ Ленинградская урамра тротуарсем тума халĕ те тытăнман-ха. Тир-сăран комбиначĕ, Чебторгăн 4-мĕш магазинĕ, государство банкĕ тата ытти предприятисемпе удрежденисем патĕнче тата урамсенче тасалăх çук.

Суту-илӳ организаци работникĕсем умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ. Вĕсен çулталăкри таварçаврăнăш планне декабрĕн 15-мĕшĕнче тултармалла. Подсобнăй хуçалăхсене пысăклатса тата пахча-çимĕçсем хатĕрлессине ӳстерсе пырса, столовăйсемпе буфетсен ĕçне лайăхлатмалла.

Халăх сывлăхне сыхлас тата халăха çутта кăларас енĕпе нумай тата çине тăрса ĕçлемелле. Сентябрь уйăхĕччен сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен пур учрежденисене те хĕле хатĕрлесе çитерес пулать. Предприятисенче ĕçе сыхлассине лайăхлатмалла, пур çĕрте те санитари тĕлĕшĕнчен тивĕçлĕ йĕрке тумалла. Кăçал пирĕн хулари шкулсенче ачасемпе хĕрачасене уйрăмăн вĕрентме тытăнмалла. Ку вĕренӳ ĕçне организацилессине чылай йывăрлатать. Çавăнпа шкулсенче вĕренӳ ĕçне лайăх туса пыма кирлĕ условисене халĕ тумалла. Шкулсене хĕле хатĕрлес енĕпе ачасен ашшĕ-амăшĕсем, предприятисен коллективĕсем пысăк пулăшу пама пултараççĕ. Çапла, сăмахран, хулари икĕ завод коллективĕ 1-мĕш тата 9-мĕш номерлĕ шкулсене шефа илнĕ. Вĕсем шкул çуртчĕсене, вĕренӳ хатĕрĕсене юсас тĕлĕшпе куллен пулăшаççĕ.

Ăмăрту договорĕнче физкультурăпа çар ĕçне тата фронтовиксен çемьисене пулăшассине лайăхлатас енĕпе сахал мар обязательствăсем палăртса хăварнă.

Обязательствăсене вăхăтра ăнăçлăн пурнăçа кĕртесси хулари пуçламĕш парторганизацисем тата комсомолпа профсоюз организацийĕсем ĕççыннисем хушшинче ăмăртăва анлăн сарса пырас ĕçе тимлĕн организацилениччен килет. Пуçламĕш парторганизаци секретарĕсен, предприяти директорĕсен тата учрежденисен руководителĕсен плана срокчен тултарма, тасалăхпа тирпейлĕх тума татăклă мерăсем йышăнмалла. Предприятисемпе учрежденисен коллективĕсен хисеплĕ задачи—хăйсем патĕнче кăтартуллă йĕрке тăвасси пулать.

Хулари чылай предприятисемпе учрежденисенче икĕ столицăн ăмăрту договорне сӳтсе явас тĕлĕшпе пухусем туса ирттернĕ. Договорпа тĕплĕн паллашнă хыççăн, рабочисем хăйсем çине обязательствăсем илеççĕ. Анчах ку ĕç пур предприятисемпе учрежденисенче те лайăх пырать теме çук-ха. Хăшпĕр пуçламĕш парторганизаци секретарĕсем, завком председателĕсем хуçалăх организаци руководителĕсем икĕ столица ăмăртăвĕ плана тултарас, хула хуçалăхне çĕклес тĕлĕшпе паллă вырăн йышăнса тăнине халĕ те ăнланса илмен. Çапла, автотранспортăн Шупашкарти отделенинче ăмăрту договорне ку таранччен те сӳтсе явман, ăна пурнăçа кĕртес енĕпе те ним те туман.

Партипе комсомол, профсоюз организацисен, предприятисемпе учрежденисен руководителĕсен хăйсен ĕçне обязательствăсене кунсерен тултарса пымалла организацилес пулать. Обязательствăсене пурнăçа кĕртсе пынипе коллективсене, хулари ĕççыннисене куллен паллаштарса тăмалла. Ку тĕлĕшпе стена хаçачĕсемпе усă курмалла, пухусенче ответлă работниксен отчечĕсене итлемелле.

Пирĕнпе ăмăртса ĕçлекен Йошкар-Ола хулинчи ĕççыннисем халĕ илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн çине тăрса кĕрешеççĕ. Çакна пирĕн асра тытас пулать. Пирĕн икĕ столица ăмăртăвĕнче мала тухма мĕн кирлисем пĕтĕмпех пур. Партипе комсомол, профсоюз организацисем тата хулари ĕççыннисем тимлĕн ĕçлесен эпир малти вырăна тухма пултаратпăр.

Д. ФЕДОРОВ,
ВКП(б) Шупашкар горкомĕн секретарĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—28, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1806

Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53 88 п. л.